26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
МАРТ
13
ШАМАТКУН
57(6294) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессишӗн тата лайӑхрах ӗҫлер

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «Колхозсемпе совхозсенче ҫамрӑк выльӑхсене сыхласа усрамалли тата выльӑхсен хисепне ӳстермелли мерӑсем ҫинчен» постановлени йышӑннӑранпа ҫулталӑк иртрӗ. Партипе правительствӑн постановленине пурнӑҫа кӗртсе пырса, орденлӑ Чӑваш республики ҫак иртнӗ ҫулталӑк хушшинче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе чылай пысӑк ӳсӗмсем турӗ. Республика выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне пур выльӑхсем енӗпе те пурнӑҫларӗ, государствӑна аш-какай памалли плана иртерсе тултарчӗ. Ҫулталӑк хушшинче мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен хисепӗ 44,9 процент, сыснасен хисепӗ 35,5 процент ӳсрӗ. Сурӑхсемпе качакасен хисепне вара 78,9 процент таран ӳстернӗ.

Выльӑх-чӗрлӗхӗн йышӗпе продуктивноҫне малалла ӳстерессишӗн Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва тухса, нумай колхозсенче выльӑхсене пӑхаканссем ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлерӗҫ. Ку енӗпе республикӑри ӑмӑртура Ишлей районӗ малта.

Республикӑри колхозсенче ҫамрӑк выльӑхсене лайӑх пӑхса ӳстерме пултаракан ҫӗршер стахановецсем палӑрчӗҫ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Правда» колхозри конюх В. Дубов юлташ 1934 ҫултанпа 64 тиха пӑхса ӳстернӗ. Колхозра ҫуралнӑ кашни тихана вӑл тӗрӗс-тӗкел пӑхса лаша тунӑ. 1942 ҫулта Дубов юлташ 14 кӗсререн 14 тиха илнӗ, пурне те пӑхса ӳстернӗ. Чкаловски районри «Звезда» колхозра пӑрусене пӑхакан М. Махмутова юлташ иртнӗ ҫулта 68 пӑру пӑхса ӳстернӗ. Фермӑра пӑрусем вилни пачах пулман.

Еҫшӗн хушса тӳлемелли йӗрке туни фермӑсенче ӗҫлекен колхозниксемпе колхозницӑсене выльӑх-чӗрлӗхӗн продуктивноҫне ӳстерессишӗн вӑйлӑнрах кӗрешме хавхалантарчӗ. Ҫӗрпӳ хулинчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра иртнӗ ҫул кашни ӗнерен 2.728 литр сӗт суса илнӗ. Ҫак колхозӑн ферминчех Драгункина юлташ хӑй пӑхакан 9 ӗнерен кашниййӗнченех 3.090 литр сӗт суса илнӗ. Стахановла ӗҫшӗн хушса тӳлемелли йӗрке тӑрӑх, Драгункина юлташ 1942 ҫулта 1.800 литр ытла сӗт илнӗ. Кун пек примерсене нумай кӑтартса пама пулать.

Выльӑх-чӗрлӗх вититсене хӗле хатӗрлесси те иртнӗ ҫул организованнӑрах пулчӗ. Выльӑхсене хӗлле пурӑнма лайӑх условисем туса парас тӗллевпе иртнӗ ҫул 7.730 вите юсанӑ, 445 вите ҫӗнӗрен тунӑ, 226.809 тонна утӑ хатӗрленӗ, 115 пин тонна силос хывнӑ. Калинино, Канаш, Комсомольски, Сӗнтӗрвӑрри районӗсем выльӑх апачӗ хатӗрлемелли плана иртерсе пурнӑҫланӑ.

Анчах та уйрӑм районсемпе колхозсенче выльӑх-чӗрлӗхӗн хисепне, вӗсен продуктивноҫне ӳстерес ӗҫе кирлӗ пек хакламаҫҫӗ. Йӗпреҫ, Кувакино, Куславкка, Шӑмӑршӑ районӗсем ҫамрӑк выльӑхсене сыхласа хӑварас ӗҫе япӑх туса пычӗҫ. Ку районсен руководителӗсем вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра ответлӑха туйса ӗҫлеме кирлине ӑнланса ҫитмерӗҫ. Хӑйсен тимсӗрлӗхне пула выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе фронт ыйтнӑ пек туса пымарӗҫ.

Халӗ колхозсенче ӗнесем, сурӑхсем йышлӑн пӑрулас, пӑрамлас вӑхӑт пырать ӗнтӗ. Ҫамрӑк выльӑхсене упраса хӑварасси халӗ чи малти вырӑнта тӑракан ответлӑ ӗҫ. Кашни ҫамрӑк выльӑха лайӑх упраса ҫӑва кӑлармалла.

Иртнӗ ҫулти пекех, кӑҫал та Чӑваш республики Мари республикипе ӑмӑртать. Ӑмӑрту договорӗнче эпир кӑҫал ҫӗнӗрен пысӑк ҫитӗнӳсемпе ӗҫлеме обязательство илтӗмӗр. 1943 ҫулта Чӑваш республикинче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне кашни колхоз тӑрӑх пурнӑҫламалла, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен хисепне ҫӗнӗрен 25 процент, сыснасен хисепне 22 процент, сурӑхсемпе качакасен хисепне 21 процент ӳстермелле. Апат ҫинче тӑракан кашни ӗнерен вӑтам шутпа 1.200 литр сӗт суса илмелле, кашни сурӑхран 2,5 килограмм ҫӑм касса илмелле тата кашни 100 сурӑхран 115 путек, кашни ама сыснаран 12 ҫӑвӑр илмелле. Выльӑх-чӗрлӗхе тӑрантарма 120.000 тонна силос хывса хӑвармалла.

Пӗтӗм ӗҫе фронтпа ҫӗршыв ыйтнине пӑхӑнтарса, хамӑр ҫине илнӗ обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫлар. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессишӗн татах та лайӑхрах ӗҫлесе, фронтпа ҫӗршыва апат-ҫимӗҫпе чӗртавар нумайрах парар.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирӗн войскӑсем ВЯЗЬМА хулине йышӑнса илнӗ

Мартӑн 12-мӗшӗнче Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи генерал-полковник В. Д. СОКОЛОВСКИЙ юлташ ертсе пыракан войскӑсем, татӑклӑн штурмланӑ хыҫҫӑн, ВЯЗЬМА хулипе чугунҫул узелне йышӑнса илнӗ.

Вязьма хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пирӗн войскӑсем ҫакӑн пек трофейӑсем ТЫТСА ИЛНӖ: самолетсем—8, танксем—83, тӗрлӗ калибрлӑ орудисем—69, пулеметсем—222, автомашинӑсемпе тракторсем — 565, снарядсемпе патронсем тата ытти ҫар пурлӑхӗ нумай, вӗсене шута илессӗ.

Противникӑн, вилнисене кӑна шутласан та, 9.000 салтакпа офицер ытла пӗтнӗ.

Вязьма хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче генерал-лейтенант В. Н. ГОРДОВ юлташӑн тата генерал-лейтенант В. С. ПОЛЕНОВ юлташӑн войскисем уйрӑмӑнах палӑрнӑ. Хулана чи малтан полковник ПЕТЕРС юлташӑн тата полковник ЯБЛОКОВ юлташӑн чаҫӗсем кӗрсе кайнӑ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Мартӑн 11-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Мартӑн 11-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех ҫапӑҫса пынӑ.

* * *

Мартӑн 10-мӗшӗнче фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче пирӗн авиаци чаҫӗсем нимӗҫсен 10 танкӗпе бронемашининчен кая мар, войскӑсемпе груэсем тиенӗ 150 автомашина ытла пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 8 батарейине пусарса лартнӑ, боеприпассен 2 складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Сычевкӑран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем тӑшман хаяррӑн хирӗҫ тӑнине сирсе пӑрахса халӑх пурӑнакан темиҫе вуншар пункта, вӑл шутра Андреевское ятлӑ район центрне йышӑнса илнӗ. Пирӗн войскӑсем 14 оруди, 20 миномет, 100 ытла пулемет тата тӑшманӑн 2.000 ытла салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Туллимар данныйсем тӑрӑх, нимӗҫсенчен 14 танк, 8 оруди, 25 миномет, 42 пулемет, 500 ытла винтовка, боеприпассем хунӑ 2 склад тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

* * *

Белый хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн войскӑсем малалла тапӑнса пырса халӑх пурӑнакан 16 пункта йышӑнса илнӗ. 500 гитлеровеца ытла вӗлерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тата тыткӑна илнисем пур. Пӗр участокра тӑшман пирӗн наступлени туса пыракан подразделенисене хирӗҫ пехотӑн пӗр батальонӗн вӑйӗпе контратака тума хӑтланнӑ. Хирӗҫ пырса ҫапнипе тӑшмана ывӑтса янӑ. Пирӗн боецсем чакса пыракан гитлеровецсен хыҫӗнченех халӑх пурӑнакан пӗр пункта вӑркӑнса кӗнӗ. Штык вӗҫҫӗн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн яла нимӗҫсенчен тасатнӑ.

* * *

Харьковран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем тӑшманӑн хаяр атакисене сирсе пынӑ. Нумай ҫухатусем тунӑ пулин те, тепле пулсан та хула патне тухас тесе, гитлеровецсем ҫӗнӗрен ҫӗнӗ чаҫсем илсе пыраҫҫӗ. Пит хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Пирӗн чаҫсем тӑшманӑн атакисене пӗрин хыҫҫӑн теприне хастарлӑн сирсе пыраҫҫӗ. 15 танк ытла пулӑшнипе, пӗр батальон таран нимӗҫ пехоти старши лейтенант Шеронин командир пулса ертсе пыракан взвод хӳтӗлекен пӗр ял ҫине наступлени тунӑ. Танмар ҫапӑҫура пирӗн боецсен пӗр ушкӑнӗ противотанковӑй тупӑран персе нимӗҫсен 7 танкне пӗтернӗ, 100 гитлеровеца яхӑн вӗлернӗ. Тупӑ стройран тухсан, боецсем гранатӑсем ывӑтса тӑшманӑн тата 3 танкне персе ҫӗмӗрнӗ. Н-ски соединени участокӗнче нимӗҫсен 700 ытла салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, 11 танк ытла, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 4 орудие тата тӑшманӑн 20 автомашинине пӗтернӗ.

* * *

Кубаньре пирӗн войскӑсем насупленилле ҫапӑҫусем туса пырса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Красноармейское ятлӑ район центрне йышӑннӑ чухне совет подразделенийӗсем 400 гитлеровеца ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 315 автомашина, 8 тягач, 506 вагон тата хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнӗ.

Сывлӑшри ҫапӑҫусенче пирӗн летчиксем нимӗҫсен 15 самолетне персе ӳкернӗ. Кунсӑр пуҫне тӑшманӑн пӗр самолетне совет зенитчикӗсем персе ӳкернӗ.

* * *

Смоленск облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ халӑх пурӑнакан пӗр пысӑк пунктра вырнаҫнӑ нимӗҫ гарнизонне тапӑннӑ. Совет патриочӗсем 100 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр отрядри партизансем нимӗҫсен 4 эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Крушени пулнипе 4 паровоз, 42 вагон тата 9 платформа арканса кайнӑ, вӗсем нимӗҫ салтакӗсемпе боевой техникӑна фронт патнелле турттарса пынӑ.

* * *

Нимӗҫсен 337-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 690-мӗш полкӑн 6-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Эдмунд Фишер ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн рота командирӗ обер-лейтенант Грекфе дивизи командирӗн приказне пӗлтерчӗ. Унта ҫапла каланӑ: йышӑнса тӑракан позицирен полкӑн каялла чакмалла пулсан, халӑх пурӑнакан пунктсене пӗтӗмпех ҫунтарса ямалла, мӗн май килнине пурне те пӗтермелле. Чакса пыракан хуласемпе ялсенчи халӑха вӑйпалах тыла илсе каймалла. Хирӗҫ тӑракансене пӗр шеллемесӗр вӗлерсе пӗтермелле». Нимӗҫсен 5-мӗш танковӑй дивизийӗнчи 14-мӗш гренадерски полкӑн 5-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Францишен Гмуздук ҫапла каласа панӑ: «Фронтӑн центральнӑй участокӗнче нимӗҫ влаҫӗсем мирлӗ халӑха вӑйпалах эвакуацилеме тӑрӑшаҫҫӗ. Вязьма районӗнче нимӗҫ салтакӗсен конвойӗ илсе каякан старикссен, хӗрарӑмсен тата ачасен ушкӑнне эпӗ хамах куртӑм. Ялсенче йӗрсе макӑрни анчах илтӗнет. Пурне те илсе каяҫҫӗ. Эвакуацилекен вырӑссен сборнӑй пункчӗ Смоленскра. Ҫак пысӑк лагере йӗплӗ пралукпа карса тухнӑ тата войскӑпа полици хытӑ сыхласа тӑраҫҫӗ».

Мартӑн 12-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Мартӑн 12-мӗшӗ ыран тӗнӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех ҫапӑҫса пынӑ.

* * *

Гжатскран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем, ӑнӑҫлӑн малалла тапӑнса пырса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Тӑшман хаяррӑн хирӗҫ тӑнӑ тата уйрӑм участоксенче контратакӑсем тунӑ. Пирӗн чаҫсем гитлеровецсем хирӗҫ тӑнине пусарса, вӗсене нумай ҫухатусем тӳстернӗ. Пӗр участокра Н-ски чаҫӑн боецӗсем халӑх пурӑнакан тӗреклетнӗ пункта штурм туса йышӑнса илнӗ, нимӗҫсен 200 ытла салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. 8 противотанковӑй оруди, 7 миномет тата 26 пулемет тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн подразделенисем боеприпассемпе тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗсем тиенӗ пысӑк обоза тытса илнӗ.

* * *

Харьковран кӑнтӑртарахра пирӗн войскӑсем тӑшманӑн хаяр атакисене сирсе тӑнӑ. Пӗр участокра артиллеристсемпе бронебойщиксем нимӗҫсен 9 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, тӑшманӑн пехоти ларса пыракан 17 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ. Харьковран хӗвеланӑҫнерехре тӑшман танкӗсемпе пехотин пысӑк вӑйӗсем пирӗн позицисене умлӑн-хыҫлӑн штурмланӑ. Ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен нумай ҫухатусем тӳссе, нимӗҫсем пирӗн подразделенисене пӑртак хӗснӗ.

* * *

Ворошиловградран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чаҫсем хастарлӑн ҫапӑҫса пынӑ. Икӗ кун хушши пынӑ ҫапӑҫура нимӗҫсен 15 орудине, 2 танкне тата тӑшманӑн 600 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Льговран хӗвеланӑҫнерехре советсен ҫӑмӑллӑн куҫса ҫӳрекен отрячӗсем тӑшманӑн тылне кӗрсе кайнӑ та, сасартӑк пырса ҫапса, нимӗҫсен вӑйлӑ тӗреклетнӗ опорнӑй пунктне йышӑнса илнӗ. Икӗ ротӑран тӑракан нимӗҫ гарнизонне пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ. Артиллери батарейине, 6 миномет, 24 пулемет тата боеприпассемпе апат-ҫимӗҫ складне тытса илнӗ.

* * *

Киев облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ мартӑн пуҫламӗшӗнче чугунҫул станцийӗсене ӑнӑҫлӑн пыра-пыра тапӑннӑ. Партизансем станци оборудованине тата гитлеровецсен апатҫимӗҫ базисене аркатса тӑкнӑ. Нумай тӗштырӑ, ҫӗрулми тата ытти апатҫимӗҫ тытса илсе халӑха валеҫсе панӑ. Ҫав отрядри партизансен тепӗр ушкӑнӗ темиҫе ҫӗрте чугунҫул линийӗ ҫине минӑсем лартса тухнӑ. Минӑсем ҫине пырса кӗрсе паровоз тата автомашинӑсем тиенӗ 8 платформа сирпӗнсе кайнӑ.

* * *

Курск облаҫӗнчи Михайловски районра нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем калама ҫук тискер ӗҫсем тунӑ. Нимӗҫсем Холстинка поселокне ҫунтарса янӑ, ҫӗрпе танлаштарнӑ, ял ҫыннисене — ваттисене, хӗрарӑмсене тата ачасене — пулеметсемпе персе вӗлернӗ. Аманнисене гитлеровецсем ҫунакан ҫуртсем ҫине пӑрахнӑ. Фашистла палачсен аллинчен поселокра мӗнпурӗ 250 ҫын пӗтнӗ. Поселока пӗтӗмпех пӗтернӗ, унта йӗр пӳрт те юлман.

ССР Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене пани

Мартӑн 11-мӗшӗнче Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ — СССР Верховный Совечӗн депутачӗ З. А. Андреева юлташ наградӑланисен пӗр ушкӑнне ССР Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене пачӗ. Наградӑсене панӑ ҫӗрте пирӗн земляк — Совет Союзӗн Геройӗ Ф. Н. Орлов юлташ пулчӗ.

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑ фронтӗнче командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫав вӑхӑтра паттӑрлӑхпа хӑюлӑх кӑтарнӑшӑн политрук заместительне А. В. Павлов юлташа Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗ, красноармеец А. В. Яцкий юлташа «За боевые заслуги» медаль панӑ.

Вӑрман материалӗсене хатӗрлесе тӑратмалли правительство заданийӗсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланӑшӑн Хӗрлӗ Чутай районӗнчи вӑрман касакан И. В. Ермолаев колхознике «За трудовое отличие» медаль панӑ.

Правительствӑн заданине кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн наградӑланӑ Я. М. Ивантаев юлташ «Знак почета» орденӗ илчӗ.

Правительствӑн заданийӗсене тылра ӗҫлесе кӑтартуллӑн пурнӑҫланӑшӑн К. Е. Егорова юлташ «За трудовую доблесть» тата А. С. Степанова юлташ «За трудовое отличие» медальсем илчӗҫ.

Юлашкинчен Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ З. А. Андреева юлташ награда илнисене саламларӗ тата вӗсене малашнехи ӗҫре ҫӗнӗ ситӗнӳсем тума сунчӗ.

СОВЕТ СОЮЗӖ ТӐРӐХ

«СТАЛИНГРАД» ФИЛЬМА ЮРАТСА ПАХАҪҪӖ

Мартӑн 10-мӗшӗнче Мускавра пысӑк кинотеатрсенче Кинохроникӑн Центральнӑй студийӗ хатӗрленӗ «Сталинград» ятлӑ ҫӗнӗ фильма, документлӑ фильма кӑтартма пуҫланӑ. Пирвайхи кунах картинӑна 55.000 ҫын курнӑ.

Кинопрокатӑн Мускаври конторине ҫав фильма ыйтса ҫар организацийӗсемпе гражданла организацисенчен, клубсемпе культура ҫурчӗсенчен заявкӑсем нумай панӑ. Кописем ӳкерекен фабрикӑсенче «Сталинград» картинӑн 300 копине пичетлеҫҫӗ. Вӗсене чи малтан фронт чаҫӗсене тата ирӗке кӑларнӑ районсене яраҫҫӗ. (ТАСС).

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Центральный фронт). Укерчӗк ҫинче: Н-ски подразделенири ротнӑй минометчиксем — старши сержант, комсомолец С. Е. Тулпанов (чӑваш халӑхӗн ывӑлӗ) тата красноармеец А. И. Костыкин тӑшман ҫине переҫҫӗ. Вӗсем иккӗшӗ те вӑрҫӑ пуҫланнӑранпах фронтра усал тӑшманпа ҫапӑҫаҫҫӗ, ҫӗр гитлеровеца ытла вӗлернӗ.

П. Сотников фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Пысӑк тухӑҫлӑ кок-сагыз туса илессишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарар!

Башкир АССР-чи Стерлибашевски районри Карл Маркс ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗн колхозникӗсемпе колхозницисем кок-сагыз акса тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсене

ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Хаклӑ юлташсем!

Пирӗн Тӑван ҫӗршыв хаяр вӑхӑтра пурӑнать. Ылханлӑ тӑшмана хирӗҫ пӗтӗм халӑх туса пыракан вӑрҫӑ ҫирӗм уйӑх хушши тӑсӑлать ӗнтӗ. Геройла Хӗрлӗ Ҫар гитлерла йытӑ кӗтӗвӗсене аркатмаллах пыра-пыра ҫапать. «Совет ҫӗрӗнчен тӑшмана массӑллӑн хӑваласа кӑларас ӗҫ пуҫланчӗ» (Сталин). Ҫакӑ вӑл пирӗн чӗресене хаваслӑх кӳрет.

Анчах та эпир хамӑрӑн ҫулпуҫ тата учитель Сталин юлташ панӑ кӑтартусене манмастпӑр: фашистла вӑрӑ-хурахсене пӗтӗмӗшпех ҫапса аркатса пӗтерсе тӑкма хамӑрӑн мӗнпур вӑя хуни тата хамӑрӑн мӗнпур майсене мобилизацилени кирлӗ. Пирӗн колхозниксем, арҫынсемпе хӗрарӑмсем, хӑйсен уйхирӗсенче ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлени тата фронтпа ҫӗршыва — тырпул, аш-какай, промышленноҫа — чӗртавар ытларах та ытларах парса тӑни кирлӗ.

Карл Маркс ячӗпе тӑракан пирӗн колхоз хамӑр ҫӗршывӑн оборонине ҫирӗплетме кирлӗ питех те паха культурӑна — кок-сагыза темиҫе ҫул хушши акса тӑвать ӗнтӗ. Кок-сагыз тымарӗнчен натуральнӑй каучук кӑлараҫҫӗ, вӑл самолетсемпе танксем тата автомашинӑсем тунӑ ҫӗрте кирлӗ.

Кок-сагыз пирӗншӗн ҫӗнӗ культура пулнӑ пулин те, эпир ҫав культурӑна акса тӑвас ӗҫе хӑвӑрт та ӑнӑҫлӑн вӗренсе алла илтӗмӗр. Эпир ҫулсерен кок-сагыз тымарӗсемпе вӑрлӑхне тухӑҫлӑн туса пыратпӑр.

1942 ҫулта, кок-сагыз акнӑ хыҫҫӑн иккӗмӗш ҫулӗнче, эпир кашни гектартан 26-шар центнер кок-сагыз тымарне тата 37,5 килограмм кок-сагыз вӑрлӑхне пухса илтӗмӗр. Кок-сагыз тымарӗсемпе вӑрлӑхне государствӑна парса укҫан пысӑк тупӑшсем тата промтаварсем нумай илетпӗр.

Кок-сагыз акса тӑвас тӗлӗшпе пирӗн 1940 ҫултанпах ӗнтӗ звеньевой Сарвар Яминова юлташ ертсе пынипе яланлӑх тунӑ звено ӗҫлет. Кок-сагыза эпир удобрени хывнӑ хирти ҫӗртме участокӗ ҫине акатпӑр. 1942 ҫулта эпир кок-сагыз калчине лайӑх пӑхса тӑтӑмӑр, 4 хутчен ҫумҫумларӑмӑр. Кок-сагыз вӑрлӑхӗпе тымарӗсене эпир вӑхӑтра тата пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртрӗмӗр. Хамӑрӑн ҫӗршывшӑн питех те кирлӗ пулса тӑракан ҫав культурӑна пирӗн колхоз кӑҫалхи ҫул татах та ытларах акать. Кок-сагыз акмалли ҫӗре эпир ҫуркунне 23 гектара ҫити саратпӑр, ҫав ҫӗр лаптӑкне яланлӑх тунӑ звеносем ҫумне ҫирӗплететпӗр. Халӗ пирӗн ҫав звеносенче тӑракан колхозницӑсене агротехника енӗпе вӗрентес ӗҫ пырать.

Кӑҫал кок-сагыз пухса илме тивӗҫлӗ кашни гектартан эпир кок-сагыз тымарне 30 центнертан кая мар тата вӑрлӑхне 70 килограмм пухса илме сӑмах паратпӑр.

Кӗркунне кок-сагыза эпир удобрени хывнӑ ҫӗртме участокӗ ҫине ҫурхи уйхир ӗҫӗсен малтанхи 2—3 кунӗ хушшинче акса хӑваратпӑр.

Кок-сагыз калчисене хӑвӑртрах ӳсме май парас тесе, эпир ретсем хушшинче кӑпкалатассине май килнӗ таран иртерех тытӑнатпӑр. Ҫу каҫиччен эпир 4 хутран кая мар ҫум ҫумлатпӑр тата ретсем хушшине 4 хутчен кӑпкалататпӑр. Кок-сагыз акнӑ участоксене ҫумкурӑксенчен таса тата кӑпка тытма пулатпӑр. Кок-сагыз калчисене каучук паман кукшапуҫ курӑкӗнчен (одуванчик) тӗплӗн тасатса тӑратпӑр.

Кок-сагыз вӑрлӑхне пухса илессине эпир 1943 ҫулта вӑрлӑх пухмалли машинӑпа туса иртеретпӗр. Ҫакӑ вӑл пире ӗҫ вӑйне перекетлеме тата кок-сагыз вӑрлӑхне пӗр тӑккаксӑр пухса кӗртме май парать.

Иккӗмӗш ҫулхи кок-сагыз тымарӗсене кӑларса пухассине эпир уйрӑмах тӗплӗн туса иртерме сӑмах паратпӑр — пӗр тӑккаланчӑк та ан пултӑр, ҫӗрте пӗр тымар та ан юлтӑр! Кок-сагыз тымарӗсене кӑларассине вӑрлӑха пухса илнӗ хыҫҫӑнах тытӑнатпӑр та тырпул вырма пуҫлаччен ҫав ӗҫе туса пӗтеретпӗр.

Эпир хамӑрӑн ӗҫ ӑнӑҫлӑ пулассине шансах тӑратпӑр. 1943 ҫулта хамӑрӑн ҫӗршыва промышленность валли натуральнӑй каучук туса илмелли чӗртавара, 1942 ҫулта панинчен, темиҫе хут ытларах паратпӑр.

Совет Союзӗнчи каучук акса тӑвакан колхозниксемпе колхозницӑсем! Кок-сагыз акакан кашни колхоз кок-сагыза пирӗн колхоз пекех тата кунтан та тухӑҫлӑрах туса илме пултарать. Эпир ҫӗршыва натуральнӑй каучук кирлӗ таранах пама тивӗҫлӗ тата паратпӑр та.

Кок-сагыз акса тӑвакан районсенчи колхозсене тата колхозниксене эпир кок-сагыз тымарӗсемпе вӑрлӑхӗсене пысӑк тухӑҫлӑн туса илессишӗн ӑмӑрту сарса яма чӗнетпӗр.

Тылра хамӑрӑн вӑй-хала хӗрхенмесӗр ӗҫлесе, ылханлӑ тӑшмана пуҫӗпех тата хӑвӑртрах ҫапса аркатма Хӗрлӗ Ҫара пулӑшӑпӑр.

Сывӑ пултӑр пирӗн тӑван совет влаҫӗ!

Сывӑ пултӑр пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар!

Сывӑ пултӑр пирӗн аслӑ полководец Сталин юлташ!

Нимӗҫ оккупанчӗсене — вилӗм!

Карл Маркс ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсен пӗрлехи пухӑвӗ хушшипе:

Колхоз председателӗ Садыков, агротехник Бикулова, звеньеводсем: С. Яминова, М. Мулагуллова, З. Бикулова, Н. Усманова, бригадир Ишмиярова, комсомол комитечӗн секретарӗ З. Минкибаева, колхозницӑсем: В. Яхина, М. Ягудина, Г. Киреева.

Машинӑсем халӗ те юр айӗнчех

КАЛИНИНО. Туҫи Мӑратри «Клевер» колхозра авӑн ҫапса пӗтерни темиҫе уйӑх ӗнтӗ... Анчах ӗҫе туса пӗтернӗ хыҫҫӑн молотилкӑсене итем ҫинех пӑрахса хӑварнӑ. Вӗсем халӗ ӗнтӗ юр айне пулнӑ, юр ирӗлме пуҫласан, молотилкӑсем йӗпенсе тутӑхаҫҫӗ. Колхозра ытти машинӑсем те унта-кунта юхӑнса лараҫҫӗ. Б. Шорников.

„Красный пахарь" колхоз Хěрлě Çар валли татах тепěр самолет туянать

ПАРАЧКАВ. (Телефонпа). «Красный пахарь» колхозăн председателě Михаил Владимирович Дубровин юлташ хăйěн ывăлě валли боевой самолет илмешкěн 100.000 тенкě укçа хывса, Сталин юлташран çав самолета хăйěн ывăлне пама ыйтнăччě. Юратнă çулпуç сулăмлă патриота «эсир кăмăл туни пурнăçа кěрě» тесе ответлерě.

Михаил Васильевич Дубровин юлташăн ěмěчě пурнăçланчě. Нумай пулмасть вăл Н. хулинче хăйěн укçипе илнě боевой самолета тăван ывăлне—Степан Михайлович Дубровин летчика пачě. Колхоза таврăнсан вăл çав тěлпулу çинчен каласа пама колхозниксен пěрлешўллě пухăвне пуçтарчě.

— Аслă Сталин манăн кăмăла пурнăçа кěртме пулăшрě: эпě хамăн 100.000 тенкě укçапа туяннă самолета тăван ывăлăма парса савăнтăм, — терě Михаил Владимирович. — Ывăлăма хăйěн самолечě çинче нимěç захватчикěсене хирěç юлашки юн тумламě юлмиччен кěрешме наказ патăм...

Манăн юратнă ывăлăм тăван ашшě умěнче, часть командованийě умěнче, пěтěм çěршыв умěнче ылханлă захватчиксене хирěç паттăррăн кěрешме, вěсене сыхлăшран пыра-пыра çапса, тěпě-йěрěпех аркатса тăкма тупа турě.

Часть командованийě манран Пăрачкав районěнчи ěççыннисем патне çыру парса ячě. Кинооператорсем эпě ывăлăма самолет панине пленка çине ўкерчěç.

Пухура Н-ски чаçран килнě çырăва вулаççě. Летчиксем хăйсен боевой ěçěсем çинчен пěлтерекен çырăва колхозниксем пыс... тимлěхпе итлеççě.

— Хěрлě Çарăн çěнтерěвěсем, вăл шутра пирěн земляк Степан Михайлович Дубровин службăра тăракан чаçăн çěнтерěвěсем те, пире фронта пулăшас ěçе малашне те вăйлăн туса пыма хавхалантараççě,—теççě колхозниксемпе колхозницăсем.

Колхозниксем, пěр кăмăллă пулса, Хěрлě Çар валли каллех тепěр боевой самолет илме 100.000 тенкě укçа хывма йышăнчěç. Колхозниксем самолета «Красный пахарь» колхоз» тесе ят пама ыйтреç.

Н-ски часть боецěсемпе командирěсем тата политработникěсем янă çырăва Пăрачкав районěнчи ěççыннисем пысăк çěкленўпе сўтсеяваççě.

Д. Голованов,
ВКП(б) райкомěн секретарě.

Вăрман хатěрлевěнче фронтри пек ěçлемелли икэрнелěх

СЕЗОНРИ ПЛАНА МАРТĂН 15-мěшě ТĚЛНЕ ТУЛТАРАССИШĚН

ÇĚМĚРЛЕ, мартăн 12-мěшě. (Хамăр корр.). Чугунçул транспорчě валли вутă хатěрлесе турттарас ěçе районри колхозсем мартăн 15-мěшě тěлне вěçлессишěн кěрешеççě. Молгачкинăри «Молодая сила» колхоз (председателě Отнюков юлташ) вăрман хатěрлевěнче ěçлеме ятарласа уйрăм бригадăсем тунă. Колхозниксем вăрманта иртен пуçласа тěттěм пуличченех ěçлеççě. Вăрман хатěрлекенсене ěç условийěсем лайăх туса панă. Çавна май колхоз мартăн 11-мěшě тěлне чугунçул транспорчě валли вутă хатěрлесе турттармалли плана ирттерсе тултарчě. Пěррěмěш кварталта колхозăн транспорт валли 560 кубометр вутă хатěрлемелле, 382 кубометр турттармалла пулнă пулсан, колхоз ěнерхи кун тěлне 788 кубометр хатěрленě, 450 кубометр турттарнă. Çак колхоз членě Михаил Артамонов нормăпа 2,5 кубометр вутă хатěрлес вырăнне тăтăшах 4—4,5 кубометр хатěрлесе пырать. Турттарас çěрте те колхозниксем лайăх тěслěхсем кăтартаççě. А. Отнюковпа В. Козлов юлташсем кашни кун 3,5-шер кубометр турттараççě.

«Вперед» колхозран вăрманта кулленех 10—12 çын ěçлет. Д. Углева, Е. Ватрушина юлташсем ěç нормине 180 процент тултарса пыраççě. Колхоз мартăн 10-мěшě тěлне 946 кубометр вутă хатěрлесе, плана 168 процент тултарнă. Турттарас енěпе те плана ыран тултарать.

Хěрлě Çарăн çěнтерěвěсемпе тата Сталин юлташа Совет Союзěн Маршалěн званине панипе хавхаланса, лучковăй пăчкăпа вăрман касакансем М. Михайлов ěнер — 6 кубометр, Е. Тарасов — 4,5 кубометр, П. Трясухин 4 кубометр вутă хатěрлерěç. План тăрăх вěсен 2,5-шер кубометр хатěрлемеллеччě.

Малта пыракан финанс агенчěсем

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Халăхăн укçи-тенкине мобилизацилес тěлěшпе ěçлекен работниксем пěррěмěш кварталта ăмăртса ěçлерěç. Амăрту укçа тенкě пухас ěçе ăнăçлăн туса пыма лайăх майсем туса пачě. Липовка ялсоветěнчи налог агенчě Козлов юлташ укçа-тенкě пухмалли плана 127,2 процент, вăл шутра военнăй налог пухмалли плана 142,3 процент тултарчě. Сигач ялсовечě укçа-тенкě пухмалли плана пěтěмěшпе 110,1 процент, вăл шутра военнăй налог пухмалли плана 103,3 процент пурнăçларě. Ку тěлěшпе финанс агенчě Метлова юлташ уйрăмах тăрăшса ěçлерě. Çěнě Шăхаль ялсовечě (финанс агенчě Долгова юлташ) укçа-тенкě пухмалли плана 102,8 процент тултарчě.

Районри финанс работникěсем халě Май уявě умěнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчěç. Укçа-тенкě пухас тěлěшпе юлса пыракан ялсоветěнчи финанс работникěсен малта пыракансен примерěпе ěçлемелле.

В. Краснов.

Кашни гектартан çěршер пăт тырă туса илессишěн

КАНАШ. Асхвари «Красное пламя» колхоз членěсем кăçал кашни гектартан çěршер пăт тырă туса илессишěн кěрешеççě. Тырпула нумайрах туса илсе фронтпа çěршыва вăйлăн пулăшас ěç вěсен пурнăçěпе ěçěн тěп тěллевě пулса тăрать.

Иртнě çулхи ěçсен итогне тунă хыççăн колхоз çуракине хатěрленме çирěп план тунă. Агротехникăллă мероприятисене туса ирттерме кашни бригада агроплан тунă. Çав плансене пурнăçа кěртсе пырас тěлěшпе бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлнă. Колхозниксем çěре çемçетес тěлěшпе çине тăрса ěçлеççě. Паянхи куна хире 8.808 тонна тислěк, 287 центнер фекали кăларнă, 197 центнер кěл, 186 центнер кайăк-кěшěк тислěкě пухса хатěрленě, 8 тонна минераллă удобрени илсе килнě, акмалли пěтěм çěр çинче юр тытса хăварнă. Çапла колхоз агротехникăн хěллехи мероприятийěсене — тырпулăн тухăçлăхне ўстерекен тěп майсене — пурне те тěплěн пурнăçланă. Пысăк тухăçлă тырпул туса илме кирлě майсене пурне те тунă.

Колхозниксемпе колхозницăсем вăрлăхсем хатěрлес ěçре ăста хуçасем пулса ěçленě. Вěсем çителěклě таран вăрлăх уйăрса хунă, кашни культурăна сортласа тасатнă. Вăрлăхсем кондициллě. Сěллěн шăтас пахалăхě 95,8 процент, туллăн — 96 процент, пăрин, — 94, пăрçан— 93 процент.

Колхозăн ялхуçалăх машинисем ěçе хатěр тăраççě. Вěсене юсанă, тасатса сěрсе лартнă. Лашасем самăр та тěреклě. Начартарах лашасене халě кўлсе çўреме чарнă, лайăх апат çине тăратнă. Çураки вăхăтěнче лашасене çитерме лайăх апат çителěклě таран хатěрлесе хунă. Лаша хатěрěсем çителěклě. Колхоз çураки вăхăтěнче колхозниксем валли столовăй тума продуктсем хатěрленě.

Колхозниксем Хěрлě Çарăн чаплă çěнтерěвěсемпе хавхаланса ěçлеççě. Вěсем хăйсен пархатарлă ěçěсемпе кулленех фронта пулăшса тăраççě.

Е. Прокопьева, Д. Павлова, Т. Емельянова колхозницăсем—стахановецсем. Иртнě çулта вěсем 250—300-шер ěçкунě ěçлесе тунă. Халě те кулленех ěçре. Колхозница Дария Павлова кăçал хăй пěччен колхоз хирне 148 лав тислěк кăларнă. Екатерина Прокопьева хăй пěччен 287 центнер фекали пухса панă.

Вăйлă тырпулшăн пыракан ăмăртура уйрăмах 5-мěш бригада малта пырать, ку бригадăна фронтовик И. Степанов ертсе пырать. Бригада кăçал хире планран ирттерсе 1.117 лав тислěк кăларнă, 91 центнер кěл, 22 центнер кайăк-кěшěк тислěкě, 37 центнер фекали пухса хатěрленě. Ытти бригадăсенче те ěç пысăк çěкленўпе пулса пырать.

В. Веселов.
Хамăр корр., мартăн 10-мěшě.

Фронта сěт-çу, аш-какай нумайрах парас тесе ырми-канми ěçлеççě

Калинино районěнчи Коминтерн ячěпе тăракан колхоз государствăна 1943 çулшăн сěт-çу тата аш-какай парса татрě. Халě 1944 çулшăн параççě. Выльăх-чěрлěхе кунта юратса пăхаççě, ăна ěрчетсе пырас ěçе пысăк вырăна хураççě.

Иртнě çул Коминтерн ячěпе тăракан колхоз государство панă плана пур выльăхсем енěпе те ирттерсе тултарчě. Мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепне планран ирттерсе 40 процент, сыснасен хисепне 150 процент ўстерчě. Сурăхсемпе качакасем ěрчетмелли плана та ирттерсе тултарчě.

Сысна ферминче ěçлекенсем Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса 1942 çулта 25 ама сыснаран 286 çурă илме обязательство илнěччě. Çав обязательствăна вěсем чыслăн пурнăçларěç.

Ěне ферминче те иртнě çул ўсěмсем пысăк пулчěç. Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, ěне сăвакансем кашни ěнерен 1.200-шер литр сěт суса илме обязательство илнě. Ěнесене вěсем питех те лайăх пăхрěç, илнě обязательствăна пурнăçа кěртессишěн ырми-канми ěçлерěç. Ěçленин результачěсем лайăх пулчěç: кашни ěне çулталăк хушшинче 1.400 литр сěт пачě.

Стахановла ěçленěшěн виçě дояркa ěçшěн хушса илме тивěçлě пулчěç, вěсем 1.050-шер литр сěт илчěç. Чи хастарлă ěçленě А. Урядникова юлташ ЧАССР Верховный Совет Президиумěн хисеплě грамотине илме тивěçлě пулчě. Выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçе аван туса пынипе колхоз районра малти вырăна тухрě, райсовет исполкомěпе ВКП(б) райкомěн куçса çўрекен Хěрлě ялавне илме тивěçлě пулчě.

Нумаях пулмасть фермăсенче ěçлекенсем Сталин юлташ февралěн 23-мěшěнче панă приказпа паллашрěç. Сталин юлташăн приказě вěсене татах та лайăхрах ěçлеме хавхалантарчě. Вěсем Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва çěнě обязательствăсем илсе хутшăнчěç.

—Эпир кăçал кашни ама сыснаран 15 çурă илессишěн, апат çинче тăракан кашни ěнерен 1.500 литр сěт суса илессишěн тăрăшатпăр. Пирěн колхозăн фермисем иртнě çул колхоза 262 пин тенкě тупăш пачěç. Хулари ěççыннисене эпир сахал мар сěт-çу, аш-какай туса патăмăр, — тет колхоз фермисен заведующийě Е. Тихонова юлташ.

Б. Шорников.

КОМСОМОЛА ИЛЕС ĚÇЕ ВĂЙЛАТРĂМĂР

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Çак кунсенче комсомолăн «Красное Именево» колхоз çумěнчи пуçламěш организацине 6 çамрăк хутшăнчě. Комсомола кěрес текенсем нумай. Вěсене те çитес кунсенчех пăхса тухса комсомол ретне йышăнатпăр.

М. Кириллова,
ВЛКСМ организацин секретарě.

Ют çěршывсенче

Америкăн Мускаври послě Стэндли тунă заявлени тата ун пирки США-ра калаçни

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 9-мěшě. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Мускаври корреспонденчě пěлтернě тăрăх, США-н Мускаври послě Стэндли Америка корреспонденчěсене çапла каланă: ман шухăшпа, Америка Российăна парса тăракан пулăшу çинчен вырăс халăхне пěлтермеççě, тенě. «Вырăс пичетěнче эпě,—тенě Стэндли,—вырăссем Америкăран пулăшу илни çинчен пěлтернине питě тимлěн шырарăм, анчах ун çинчен чăн-чăн пěлтернине тупаймарăм».

ВАШИНГТОН, мартăн 9-мěшě. (ТАСС). США-н государственнăй секретарěн обязанноçěсене туса пыракан Уэллес пресс-конференцире паян çапла каланă: пичет представителěсем валли тунă хăйěн заявленийěн текстне государственнăй департамента ярса пама хушса, Стэндли патне телеграмма ятăм, тенě. Анчах та Стэндлирен ответ илмен-ха. Малалла Уэллес çапла каланă: Стэндли тунă çак заявлени Америка правительствипе малтан калаçса илмесěр, правительство çине кăтартмасăр пулни çинчен эпě пурне те паллă тăвасшăн. Пěрлешўллě нацисем пěрне-пěри ăнланса тěнěл держависен тиранине тěпренех аркатса тăкас шутпа пěтěçни, пěрлешўллě нацисен хăрушсăрлăхěпе ирěкне çăлса хăварассишěн пěрлешни. пěрлешнě çěршывсем пěрне-пěри тěпренех ăнланса тăрас мар пулсан ниме те тăман пулěччě. Уэллес шучěпе пěрне-пěри шанса пěрне-пěри ěненни пур, çавăнпа та посол Стэндли калама пултарнисем пěтěмпех иккěлентерес шутпа мар, çавăн пек ěненўпе ăнлану пурри тěлěшпе кирек епле иккěленěве те пěтерессишěн пулнă, тенě.

Представительсен палатинчи ютçěршыв ěçěсен комиссийěн председателě Блум государственнăй департаментпа калаçнă хыççăн представительсен палатинче Стэндли выступленине «питě ăнăçсăр выступлени» тесе хакланă. «Вырăс хаçачěсене тěплěн пăхса тухнă хыççăн, — тенě Блум, — Америка Российăна çар пулăшăвě пани çинчен вěсем пурне те пичетленине куртăмăр. Америка Совет Союзне пулăшни çинчен калакан, хěçпăшала кивçене тара парас закона пурнăçа кěртес тěлěшпе ěçлекен уполномоченнăй Стеттиниус январěн 23-мěшěнче тунă заявление совет пичечě пěтěмпех пěлтернěччě. Ман шутпа эпир Российăна пулăшса тăни çинчен пěлтернисене Российăра пěтěмпех пичетлеççě», тенě.

США сенатěнчи ютçěршыв ěçěсен комиссийěн председателě Коннэли—Стэндли выступленийě «çавтери ăнăçсăр», тесе пěлтернě. Коннэли каланă тăрăх, Америка пулăшнине вырăс халăхě пěлсе тăрать.

Уилки тунă заявленире çапла каланă: «шухăшламасăр тунă заявленисем сиен кўме çеç пултараççě», тенě. «Российăна халě-и, е хăçан та пулин кайран кам та пулин Америкăра сутасшăн пулни çинчен пěлместěп эпě», —тенě вăл. «Эсир Российăна материалсемпе тата урăх фронтсенче çапăçнипе пулăшни çинчен Российăра кам та пулин пěлмесěр тăни çинчен эпě илтмен».

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 10-мěшě. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчě, пресс-конференцире Уэллес тунă заявлени çинчен каласа, Уэллес Стэндли выступленийěпе кăмăлсăр пулнине палăртать. Пичет представителěсене пухса Уэллес тунă заявление Америка хаçачěсем Стэндли выступленине сирсе янă пек кăтартакан заголовоксем парса пичетленě. Пичет çавăн пекех Уилки тата представительсен палатин ютçěршыв ěçěсен комиссийěн председателě Блум заявленине анлăн пěлтерет. Уэллесăн пресс-конференцире тунă заявленин стенограммине пичетлеме ирěк парса, государственнăй департамент татăклă утăм тунине Вашингтонри корреспондентсем паллă тăваççě. Вăл заявленире Уэллес Стэндлине официальнăй йěркепе асăрхаттарнă.

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 10-мěшě. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Мускаври корреспонденчě Кэссиди мартăн 5-мěшěнче тухнă хăйěн статьинче çапла калать: Совет Союзěнче сăнанă тăрăх, СССР, халăхě Совет Союзне Америка епле пулăшнине пěлсе тăрать, тет. «Měншěн тесен Рузвельтпа Черчиллěн çак ыйтусемпе тунă заявленийěсене пурне те вěсенчи пур цифрăсемпе пěрлех пичетлеççě. Вырăссем хаçатсене вулама питě юратаççě». «Вырăссем, — çырать Кэссиди, — эпě вěсемпе калаçнă чухне, Америка пулăшнине пысăка хурса хаклани çинчен уççăнах каласа пачěç», — тет.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн Мускавран тин çеç таврăннă корреспонденчě Хиндуис радиопа тухса каланă хăйěн сăмахěнче Стэндли тунă заявленипе хăй килěшменнине палăртнă. Хиндус çапла каланă: Совет Союзне пулăшни çинчен Рузвельт тунă заявленисене совет пичетěнче анлăн пěлтереççě, анчах фронта мěн янине анчах пěлтермеççě, мěншěн тесен вăл çар секречě пулса тăрать, тенě.

ЛОНДОН, мартăн 10-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонри хăйěн корреспонденчě пěлтернине пичетлет. Унта çапла каланă: Вашингтонра Уэллес заявленийě Стэндли позицине сивлет тесе ăнланаççě. Корреспондент каланă тăрăх, Вашингтонри дипломатиллě ушкăнсенче Америка правительствин позицине Уэллес хăвăрт ăнлантарса пани Америка Совет Союзěпе халь çеç мар, вăрçă хыççăн та пěрлешсе ěçлесшěн пулнине пěлтерет.

ПАРИЖПА ЛИОНРА ЛАРУ-ТАРУ ÇИВĚЧЛЕННИ

ЛОНДОН, мартăн 11-мěшě. (ТАСС). АФИ агентстви пěлтернě тăрăх, Парижра лару-тăру питě çивěчленсе кайнă. Хулан нумай урамěсенче нимěçсен баррикадăсем тумалла пулнă. Нимěçсен чылай казармисем тавра йěплě пралук карса тухнă тата хăйăр тултарнă михěсем купаланă. Пăлханусем пуласран шикленсе Парижа çар чаçěсем илсе пынă. Çак кунсенче хулана эсэсовецсен икě полкě пырса çитнě.

Франци патриочěсен хастарлăхě ўсни çěршер пин Франци рабочийěсене Лаваль вăйпалах Германие яма килěшмипе пулнă тесе пěлтереççě.

ЛИОН, мартăн 11-мěшě. (ТАСС). Кěрешекен Францин штабě пěлтернě тăрăх, Лионри рабочи кварталěсенчен пěринче урам тăрăх пыракан нимěç салтакěсене тапăнса вěсем çине гранатăсем вăркăнтарнă. Нимěçсем автоматсенчен йěркесěррěн пеме пуçланă, çавна пула иртсе пыракан икě çынна вěлернě. Патриотсем нимěçсен 29 салтакне вěлернě е амантнă. Хулара кашни килтех ухтарусем тăваççě.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙЕПЕ ФЛОЧĚН ĚÇĚСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 11-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви пěлтернě тăрăх, мартăн 9-мěшěнче Англи самолечěсем Сицилия утравěн кăнтăр пайěнчи чугунçул объекчěсене атакăланă. Куçса çўрекен составсене тата тěрлě чугунçул сооруженисене сиенленě.

Çав кунах Англи карапěсем Голланди çыранě патěнче пěр танкер путарнă тата ытти темиçе карапа сиенленě.

Пирěн землякcем

Халăх ывăлěсем

Хăйěн умěнче выртакан карттă çине нумайччен пăхса ларчě вăл. Вара икě мăнă аллине каялла çурăм хыçнелле чăмăртаса тытса, кěтессерен-кěтессе утса çўреме пуçларě.

Унăн çапăçури тусěсем ăна куçран пăхса, вăл мěн те пулин каласса кěтсе, сăмах хушмасăр, шăппăн лараççě. Вěсем пěлеççě—пěтěм ăс-тăн вăйěпе кўлěнсе ěçленě чух, капитан блиндажра шăплăхпа канăçлăх тăнине юрататъ. Ун пек чухне Фурасев, блиндаж тулли çынсем лараççě пулсан та, вěсем пуррипе çуккине туйми пулать. Унăн пěтěм кěлеткийě ěçе парăнать. «Çичě хут виç те, пěр хут касса тат», е «Çын шухăшне витěр курма пěл», теме юрататъ.

Боецсем унăн шухăшне витěр курма пěлеççě ěнтě, ăна çур сăмахранах ăнланаççě. Пěррехинче вěсем хальхи пекех блиндажра ним шарламасăр ларнă. Çанталăк ун чухне уяр мар тăнă, тўпене хăмăр-хура пěлěт хупласа илнě пулнă. Нимěç çăханěсем пěлěтсем хушшипе пытанса, батальон позицийěсем çине систермесěр тапăннă. Тўперен темиçе çěршер килограмм бомба тăкăнма пуçланă.

Фурасев хăраса ўкмен. Вăл алла автомат илсе блиндажран тухнă та, çěр çине месерле выртса, пуç урлă вěçе-вěçе иртсе каякан фашистсен самолечěсене тăвăллă вут-çулăмпа ăшалама пуçланă. Ана кура пěтěм батальон месерле выртса тăшман самолечěсем çине винтовкăсенчен, пулеметсенчен, танксене хирěç кěрешмелли пăшалсенчен пенě. Пилěк бомбардировщик вутпа хыпăнса çěре тăраннă. Çак хыпар ун чухне пěтěм фронт тăрăх саланнăччě. Унтанпа сахал мар паттăрла ěçсем тунă ěнтě унăн батальонě. Халě чăваш халăхěн паттăр ывăлěн Фурасевăн кăкăрě çинче Хěрлě Çăлтăр орденě çиçсе тăрать.

Боецсем капитанпа пěр шухăшлă. Вěсем хăйсен командирě халě мěн çинчен шухăшланине туяççě, унăн кěске те ăнланмалла сăмахěсене кěтсе лараççě. Кăмака умěнче тěрмешекен повар Елена Савчук, ăна-кăна пăхмасăр, хăйне тивěç ěçе тăвать. Сайра-хутран Елена капитан еннелле çаврăнса тăрать, сăмах хушса каласшăн пулас вăл, анчах командир куçěсем ун еннелле пăхманнине кура, чěлхе вěçěнчи сăмахсене каялла çăтать.

— Григорьева чěнěр ман пата,— терě сасартăк капитан, вара вăл каллех сěтел хушшине кěрсе, янаххине сулахай ал тупанě çине хурса, чылайччен нимěн чěнмесěр ларчě. Карттă çине тěслě карандашсемпе паллăсем туса чěрсе тухрě вăл. Унтан, йывăр ěçре пулса халран ўкнě çын пек, тарăнăн сывларě те боецсем çине кăмăллăн пăхса кулчě.

— Мěн эсир, кěçěн çынсем мар пулě-çке, сас-чěв кăлармасăр шăппăн лараттăр? Е сирěн чěлхесем çухалчěç-и? — шўтлеме пуçларě капитан.

Боецсем ыйăхран вăраннăн пулчěç, сăмахран сăмах хушса, шавлăн, хаваслăн кулса калаçма пуçларěç. Елена та часах чашăк-тирěксене хускатма тытăнчě, сěтеле васкавлăн витрě, ун çине çатмара çупа ăшаланă аш-какай, консерва, çăкăр-тăвар кăларса хучě, пăсланакан чейник лартрě.

— Ушкăнпа апатланни чěре патне тутлăнрах пырать теççě. Ларăр, хăналам сире.

— Эпир нумай пулмасть апатланнă, ан чăрманăр, капитан юлташ,— таврчě сержант Корольков.

— Капитан юлташ, эсир вěсем пирки ан хумханăр. Вěсем кěрхи панулми пек тутă. Эсир пур, акă талăк ěнтě, ăша пěр чěптěм те йышăнман, —терě Елена.

— Э, Елена, эсě каллех суятăн. Ак хыт-кукар!—кулчě капитан.

— Хыт кукар-и, хыт кукар мар-и, маншăн пурпěрех, капитан юлташ. Манăн сире тăраниччен апатлантарас пулать, унсăрăн мана каллех майортан тивет.

— Ак тамаша, хăратма пуçларě ěнтě.

— Эх, капитан юлташ, хăратса-и вара. Эпир вěт яланах тутă çўретпěр, эсир пирěншěн кунěн-çěрěн... Елена сăмахне вěçлеймерě. Унăн кăмăлě хуçăлчě пулас, пуçне усрě те, кăмака патне кайса тăчě.

— Юрě, ан хумхан, тăраниччен апатланăп, анчах эсě майора пěр сăмах та ан шарла.

Сăмах çине сержант Григорьев килсе çитрě. Унăн сивě çилре пулса хăмач пек хěрелнě пит-куçě савăнăçлă. Вăл капитан патне çирěппěн утса пычě те, тўп-тўррěн тăрса уçă та янравлă саспа:

— Капитан юлташ, эсир хушнипе сержант Григорьев килчě,—терě.

— Пит аван, Григорьев, вăхăтра килтěн. Апатланма лар.

— Спасибо, капитан, эпě тин çеç апатлантăм.

Фурасев Елена çине кулсарах куç хěсрě те, апат-çимěçе айккинелле сирсе, сěтел çине карттă сарса хучě.

— Дивизи чаçěсем наступлени пуçлаççě,—сăмах тапратрě капитан. —Пирěн батальонăн виççěр çиччěмěш высота патне тухса противника ак çак юханшывăн чăнкă çыранěсем хěррине хěссе çаврса илмелле. — Фурасев карандашпа карттă çине тěллерě. — Нимěçсем кěпер урлă каçса, мăн çул тăрăх тарма пăхěç. Вěсен çулне пўлес пулать. Тăшман çěнě подкрепленисем яма пуçласан, вěсене салатса ямалла е чарса тăмалла. Систермесěр тапăнса, кěпере хамăр алла тытса илмелле. Ак çак пўртсенче нимěçсен хуралěн пысăк мар гарнизонě тăрать, ку гарнизона пěр салтак юлми пěтерсе тăкас пулать. Çăмăл ěç мар.

— Ăнланатăп, капитан юлташ.

— Анчах пěлместěп, кама шанса пама пулать-ши ку операцие. Сирěн шутпа мěнле? —ыйтрě капита Вăл хăйěн аллисене Григорьев хулпуççийěсем çине хурса, ачашшăн пăхса тăчě.

— Капитан юлташ, ирěк парăр манăн отделение!—хумханса таврчě Григорьев.

— Эпě те çапла шухăшлатăп. Анчах пěр отделенипе вăй сахалтарах пулě. Хăвăр взводран тата 20 çын уйăрса ил.—Фурасев сехет çине пăхрě.—Халě шăп та шай вунă сехет. Çанталăк уяр мар, каç тěттěм. Лайăх вăхăт. Тепěр икě сехетрен çула тухăр.

— Тепěр икě сехетрен çула тухмалла, приказ маншăн паллă.

— Асту Григорьев, тем пулсан та кěпере тытса тăрăр. Сирěнтен пěтěм операци ăнăçлăхě килет.

— Приказа пурнăçа кěртетпěр. Ěçе пуçăнма ирěк парсамăр, капитан юлташ.

— Ну, сывă пул, Григорьев юлташ. Чим-ха, эпě пачах маннă, паян приказ илтěм: сире командующи „За отвагу" медальпе наградăланă. Пěтěм кăмăлтан саламлатăп. Юрě, кайăр, сывă пул...

Капитан вырăнтан тапранмасăр блиндаж алăкě çине нумайччен пăхса тăчě. Тулта ура айěнче юр шăтăртатса пусăраннă сасă майěпěн вăйсăрланса çухалса пычě. Сержант утăмě вăл. Григорьев çирěппěн малалла утни куçа куранпăн туйăнчě. Хăрушă, анчах тăван çěршывшăн питех те кирлě ěç патне хавхаланулла та савăнăçлă чěрепе утса кайрě вăл.

Капитан **М. ЯКИМОВ.**
(Юлашки пулать).

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Шупашкарти комплекслă геологи партине старши коллекторсем, коллекторсем тата сменнăй бурмастерсем кирлě.
Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар хули, Чернышевски урамě, 6-мěш номерлě çурт, 9-мěш номерлě пўлěм.
АДМИНИСТРАЦИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарěн—4—26, промышленность пайěн—3—99, ялхуçалăх пайěн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 113 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.